25-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1942 ИЮЛЬ 21 ЫТЛАРИКУН 168(5108) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Предприятисем колхозсене пулăшаççĕ

Тыррулсене пухса кĕртесси—нимĕçсен фашистла захватчикĕсене аркатса тăкас ĕçре вăрçă тата хуçалăх енĕпе пирĕн умра тăракан пысăк задачăсенчен пĕри. Çак ĕçе ăнăçлăн туса пырасси комбайнсене, тракторсене, жнейкăсене, молотилкăсене тата ытти ялхуçалăх машинисене вăхăтра хатĕрлесе çитерессинчен, уйăхирте, нимсем çинче, тыррулсене турттарнă çĕрте ĕçлеме мĕнпур вăя кутăшлантарниничен килет.

Малта пыракан МТС-семпе колхозсем ялхуçалăх машинисене уборкăра ĕçлеме хатĕрлесе çитерчĕç ĕнтĕ. Машинăсене юсаса хатĕрлес ĕçре хăшпĕр колхозсемпе МТС-сене промышленность предприятийĕсем пысăк пулăшу пачĕç. Сĕмакран, Çĕмĕрлери «Большевик» завод Хударти Ленин ячĕпе тăракан колхоза жнейкăсем юсаса панă. Унтах МТС тракторĕсен баллмакĕсене электросварка тунă. Çĕмĕрлери древкомбинатăн тимĕрçисемпе слесарĕсем Турханти колхозăн молотилкисемпе жнейкисене юсаççĕ, вĕсемех МТС валли комбайн чаçĕсене çĕнĕрен туса тата юсаса панă. Канашри вагонсем юсакан завод тата МТМ ялхуçалăх машинисене юсаса хатĕрлес тĕлĕшпе колхозсене пысăк пулăшу параççĕ.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тыррулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленипе: «Ремонтра ĕçлекен рабочисем кирлĕ МТС-семпе совхозсене пулăшма хулари промышленность предприятийĕсенчен, çар заказĕсене пурнăçа кĕртессине сиен кӳмесĕр, тимĕрçĕсемпе слесарьсем, токарьсемпе сварщиксем, çавăн пекех тата инженерсемпе механиксем вăхăтлăха ярас», тесе каланă. Çак постановленирен ĕнтĕ, МТС-семпе совхозсен руководителĕсен тата колхоз председателĕсен машинăсене юсас тĕлĕшпе промышленность предприятийĕсен руководителĕсемпе вăхăтра калаçса татăлма кирли курăнать, çавна тусан машинăсене хăвăртрах юсаттарса çитерме пулать. Паллах ĕнтĕ, ку вара машинăсем юсас ĕçре пĕтĕмпех промышленность предприятийĕсем пулăшу парасси çине шанса лармаллине пĕлтермест, ку ĕçре колхозсенчи тата МТС-сенчи вăйсемпе те туллин усă курмалла.

Çуракине хатĕрленнĕ чухне те промышленность предприятийĕсем ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе пысăк пулăшу пачĕç. Промышленность предприятийĕсем МТС-семпе совхозсене шефа илес тĕлĕшпе тунă пуçарулăха ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ырларĕç. Çапла ĕнтĕ промышленность предприятийĕсем МТС-семпе совхозсене пулăшса пырасси—хисеплĕ те чыслă ĕç пулса тăрать. Çак пулăшăва вăйлатас пулать.

Машинно-тракторнăй станцисен тата колхозсен ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсемпе материалсем час-часах çитмеççĕ. Çав вăхăтрах кашни заводра тимĕрçĕсем, слесарьсем, токарьсем тата ытти ăсталăха лайăх пĕлекен рабочисем сахал мар, вĕсем машинăсен çитмен пайĕсене часах туса пама пултараççĕ. МТС-семпе совхозсене машинăсем юсакан бригадăсем вăхăтлăха яма та промышленность предприятийĕсен майĕсем пур.

Промышленность предприятийĕсем хăйсен ытлашши запаслă пайĕсемпе материалĕсене парса МТС-семпе колхозсене пулăшма пултараççĕ. Çавăнпа пĕрлех МТС-семпе колхозсен мастерскойĕсенчи кивĕ станоксемпе ĕç хатĕрĕсене юсаса ĕçлеме юрăхлă туса пани те усăллă пулать.

Кусемсĕр пуçне тата шефсем совхозсемпе колхозсене уйхир ĕçĕсене туса пыма, авăн çапма çынсем парса пулăшма пултараççĕ. Заводсенчи рабочисемпе служащисен арăмĕсем тата ачисем уборкăна яла хавасланса каяççĕ. Çакна акă мĕнрен курма пулать: утă çулма тата çум çумлама вăхăтра колхозсенче ĕçлеме Улатăр хулинчен 903, Сĕнтĕрвăрринчен—367, Йĕпреçрен—489, Çĕмĕрлерен—391, Канашран 298, Куславккаран—971 çын кайнă.

Хуларан яла каякансен колхоз производствинче тăрăшса ĕçлемелле, çавăнпа пĕрлех колхозниксем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе туса пыма тăрăшмалла.

Промышленность предприятийĕсем тата хуласем енчен МТС-сене, совхозсене тата колхозсене пулăшасси—пысăк та ответлă ĕç. Парти, комсомол, профсоюз организацийĕсен, предприяти руководителĕсен колхозсене пулăшас ĕçре пуçарулăх вăтартса, çак ĕçе организацилесе пырас пулать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 19-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 19-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç Воронеж районĕнче тата Миллеровăран кăнтăртарах вырăнта çапăçнă. Командованин приказĕ тăрăх пирĕн войскăсем Ворошиловград хулинчен туха кайнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

Иртнĕ эрне хушшинче, июлĕн 12-мĕшĕнче 18-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, противникăн аэродромĕсем çинче тата пирĕн зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 211 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 187 самолет пĕтнĕ.

* * *

Июлĕн 18-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 80 танкне, 9 бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 245 автомашинине, горючи тултарнă 17 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 3 складне тата горючи усракан 2 склада сирпĕнтерсе янă, 7 полевой орудне пусарса лартнă, инçете перекен 11 орудне сиенленĕ, противникăн пехотине 3 батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн чаçсем гитлерла войскăсене хăватлăн хирĕç пыра-пыра çапаççĕ. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн кунĕпех вăйлă çапăçу пынă. Каçалапа пирĕн боецсем танксем пулăшса пынипе çав пунктăн çурçĕр-хĕвелтухăç хĕррине пырса кĕнĕ, калĕ урамсенче çапăçаççĕ. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, халăх пурăнакан çак пунктшăн пынă çапăçура нимĕçсен пин ытла салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Нимĕçсенчен 14 противотанковăй оруди, 4 йывăр полевой оруди, боеприпассен складне тата ытти тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем нимĕç войскисен чылай пысăк группировкине Дон шывĕ çумне хĕстерсе хунă. Пирĕннисем артиллерипе минометсенчен вăйлăн персе тăрса тата пирĕн авиаци активлăн çапăçса, противника чарса тăнă. Ун хыççăн пирĕн пехота наступление кайнă та противникăн çав группине çапса саласа ĕçе вĕçне çитерме. Вăл çапăçура нимĕçсен пехотине 2 полка çити вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 18 танкне тата орудисемпе пулеметĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Миллеровăран кăнтăртарах вырăнта пирĕн войскăсем оборонăллă вăйлă çапăçусем туса пынă. Пирĕн боецсем, тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пырас тесе, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çирĕп тăрса çапăçаççĕ. Пирĕн пĕр батальон, хамăрăн йывăр танксен роти пулăшса пынипе, нимĕçсен пехотин икĕ полкĕ тунă атакăсене икĕ кун хушши пĕр вĕçĕмех сирсе сирсе пынă. Çак çапăçура противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем çĕршер çын пĕтнĕ. Пирĕн боецсем нимĕçсен 16 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Нимĕçсем хăйсен пехотипе танкĕсен çĕнĕ вăйĕсене илсе пынă хыççăн çеç пирĕн батальонри боецсем каялла чакнă. Тепĕр участокра пирĕн войскăсен тылне антарнă нимĕç парашютисчĕсене пĕтĕмĕшпех вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче разведка тăвакан группăсем активлăн кĕрешнĕ. Пирĕн темиçе боец противникăн тылне кĕрсе кайнă та пĕр ял çине тапăнса 35 нимĕçе пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне çунтарса янă. Петрочук юлташ ертсе пынипе пирĕн разведчиксен пĕр группи 30 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, противникăн огневой точкисем ăçта вырнаçнине пĕлнĕ хыççăн пирĕн разведчиксем хăйсен чаçне каялла таврăннă.

* * *

Зобин юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири боецсемпе командирсем-снайперсем, орудисемпе минометсенчен персе, 5 çун хушшинче 345 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Украинăри партизансен Ж. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ противникăн полевой аэродромĕ çине тапăннă. Совет патриочĕсем нимĕçсен аэродром çинчи охранине пĕтерсе тăкнă, 3 истребителе тата горючи складне çунтарса янă. Çак отрядах нимĕçсен транспортнăй колонни çине пенĕ, гранатăсем йышлăн ывăтнă, нимĕçсен çар грузĕсем тиенĕ 3 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата нимĕç оккупанчĕсене 40 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕçсен 82-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 166-мĕш полкри салтак Вальтер Хорнсенер çумĕнче, Воронеж патĕнче вĕлернĕскерĕн çумĕнче, унăн Оснабрюка хăйĕн Эльза ятлă арăмĕ патне яма ĕлкĕреймен çырăвне тупнă. Акă мĕн çырнă вăл июлĕн 9-мĕшĕнче: «Вырăссем пайн пире танксем пулăшса пынипе атакăларĕç. Пирĕн юн питĕ нумай тăкăнчĕ. Эпир икĕ кун çеç çапăçатпăр-ха, анчах та ротăсенче çынсем пирĕн питĕ сахалланса юлчĕç, малашне те кун пекех пулса пырсан—пире пурне те вĕлерсе пĕтереççĕ... Ĕнер эпĕ кунĕпех хамăрăн батальонри вилнĕ салтаксене шăтăка сĕтĕре-сĕтĕре пырса пăрахрăм. Çакă вăл питĕ хăрушă япала».

* * *

Орел облаçĕнчи Воина ятлă яла нимĕçсен фашистла бандичĕсем пĕтĕмĕшпех çаратса пĕтернĕ. Пурăнмалли 255 çурта, выльăхсене хупса усрамалли 6 çурта, колхозăн 4 складне тата колхозниксен мĕнпур пурлăхĕсене çунтарса янă. Гитлерла мерзавецсем 75 çулти старике Петр Николаевич Уткина, 7 çулти Иван Финогеевич Добренкова, 63 çулти Александра Тимофеевна Бычковăна тата ялти ытти çынсене персе вĕлернĕ.

* * *

Красноуральскри пăхăр шăратакан заводăн коллективĕ июль уйăхĕнчи çурурйăх программине 123 процент тултарнă. Металлурги цехĕ пиншер киловатт-сехет электроэнерги тата топливо нумай перекетлесе хăварнă. Пăхăра тударан суйласа уйăрса илес тĕлĕшпе ĕçлекен фабрика план тăрăх панă нормăсенчен ирттерсе 10-шар тонна пăхăр тупса панă.

Июлĕн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июлĕн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç Воронеж районĕнче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн чаçсем оборонăна куçнă противника хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ. Халăх пурăнакан пĕр пунктра кунĕпех пынă çапăçу пирĕн пехотинецсемпе танкистсем çĕнтернипе вĕçленнĕ. Çав ялăн урамĕсенче нимĕçсем, вилнисене кăна шутласан та, 1.500 салтакпа офицера çухатнă. Пирĕннисем татах 5 оруди, минометсен 2 батарейине, 24 пулемет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Пĕр участокра гитлеровецсен танкĕсем контратака тунă. Пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем, вĕсем çине персе, нимĕçсен 7 машинине çĕмĕрнĕ. Унтан флангран пирĕн йывăр танксем пырса çапнă. Тата 12 танк çухатсан, нимĕçсем каялла чакнă. Тепĕр участокра нимĕç пехотин батальонĕ «психикăлла» атака тунă. Гитлеровецсем çав атакăна ӳсĕр пуçпа кайнă. Пирĕннисем артиллерирен, минометсенчен тата пулеметсенчен персе, наступлени тăвакан нимĕçсене пурне те тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Миллеровăран кăнтăртарах вырăнта пирĕн войскăсем наступлени тăвакан нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра гитлеровецсем пирĕн чаçсен çапăçу йĕрки ăшне кĕрсе кайнă. Пирĕн войскăсем, флангсенчен пырса çапса, противник пирĕн оборонăна татса кĕме хăтланнине пĕтерсе лартнă. Çав çапăçура фашистсен 1.200 çын ытла вилнĕ, 15 танк, 10 оруди тата 60 пулемет пĕтнĕ. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем противникăн йышлăрах вăйĕсем хĕснипе çĕнĕ позицисем патне чакнă.

* * *

Калинин фронтĕнче пирĕн войскăсем противникăн пысăк мар отрячĕсемпе тытăçа-тытăçа илнĕ. Нимĕçсен пехоти пĕр батальона çити вăйпа старши лейтенант Махоркинăн подразделенине атакăланă. Пирĕн боецсем, пехотăн хĕçпăшалĕсенчен персе, çав атакăна сирсе янă. Гитлеровецсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче вĕсен 80 салтакпа офицер вилсе юлнă. Соколов юлташ командир пулса тăракан чаçри артиллеристсем минометсен батарейине тата пĕр оруди пĕтерсе тăкнă, противникăн пĕр рота пехотине сапаласа янă.

Командăй пункта донесенипе пыракан красноармееца Шестаков юлташа 6 нимĕç салтакĕ çавăрса илнĕ. Хастарлă боец винтовкăран персе çав гитлеровецсене улттăшне те пĕтерсе тăкнă та донесение командира вăхăтра çитерсе панă.

* * *

Калинин облаçĕнчи партизансен Р. юлташ ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсен халăх пурăнакан пĕр пунктри гарнизонĕ çине çĕрле пырса тапăннă. Партизансем часовойсене пĕр сасăсăр вĕлернĕ те командир панă сигнал тăрăх гитлеровецсем вырнаçнă çуртсене çĕмĕрсе кĕнĕ. Штык вĕççĕн çапăçса, партизансем нимĕçсен 85 салтакĕпе 8 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Волхов фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Хĕрлĕ Çар енне нимĕç çарĕнче тăракан поляк салтакĕсен пĕр ушкăнĕ куçнă. Вĕсенчен пĕри — нимĕçсен 269-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтак Вацлав М. çапла каласа панă: «Нимĕç оккупанчĕсем Польшăна çаратса пĕтерчĕç, халăха тустарса юхăнтарса ячĕç, çĕршер пин çынна персе вĕлерчĕç. Манăн атте-анне хуçалăхне оккупациллĕ влаçсем нимĕç штурмовикне панă. Аттепе анне халь ун патĕнче батраксем пулса ĕçлеççĕ. Нумай хресченсене нимĕçсем тасра илсе кайнă, паллă мар. Поляксем хăйсем тарăхнине кăшт кăна палăртсанах нимĕçсем вĕсене тĕрмене персе чикеççĕ е персе вĕлереççĕ. Кăçал çуркунне нимĕçсен влаçĕсем çара темиçе çулти поляксене илнĕ. Анчах та кам хăйĕн тăван çĕршывне юратать — вăл вырăссене хирĕç çапăçмасть. Пирĕн тăшмансем ăçтине тата туссем ăçтине эпир пĕлетпĕр, çавăнпа та Хĕрлĕ çар енне каçса килтĕмĕр», тенĕ.

* * *

Норвегири госпитальсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчен аманса килнĕ нимĕç салтакĕсемпе тулса ларнă. Нимĕç влаçĕсем мĕнпур больницăсене, шкулсене тата уйрăм çынсен çуртĕсене те нумайĕшне лазаретсем туса хунă. Медицина персоналĕ тата медикаментсем çукки пе аманнисенчен питĕ нумайĕшĕ вилеççĕ. Ослори хăшпĕр госпитальсенче унта выртакан аманнă салтаксенчен 70 процент таран вилеççĕ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн броня витнĕ дрезина пĕрре кăна мар çапăçуллă разведкăсем тăва-тăва ирттернĕ, нимĕç оккупанчĕсене тӳрремĕнех пере-пере вĕлернĕ. Ӳкерчĕк çинче: Старши сержант Г. В. Кучанский ертсе пыракан броня витнĕ дрезинăн экипажĕ разведкăна тухса кайма хатĕрленет.

Г. ЧЕРНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

ХĔРЛĔ ÇАРАН ТЫРА ФОНДНЕ

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «1942 çулти тырăран Хĕрлĕ çар валли тырă фончĕ тумалли» çинчен йышăннă постановление пирĕн çĕршыври колхозсенче пуринче те ырлаççĕ.

Туркменири ялхуçалăх артелĕсем нумайĕшĕ халь Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне тырă аванс шучĕпе леçеççĕ.

КĂНТĂРЛА ТА ÇĔРЛЕ ТЕ ТЫРА ВЫРАÇÇĔ

Сталинград облаçĕнче кĕрхи тырăсене массăллăн выраççĕ. Дон сывăхĕнчи колхозсенче нумайĕшĕнче тырра кăнтăрла та, çĕрле те выраççĕ. Тырă вырасси уйрăмах Калачевски районра лайăх пырать. Юлашки эрне хушшинче унта тырă вырмалли простой машинăсемпех тата çавасемпех 7.000 гектара яхăн вырнă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Ят вырăнне—номер

Гитлеровецсем совет гражданĕсене чуралăхри пек йĕркепе регистрацилеççĕ

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Орел облаçĕн гитлеровецсем оккупациленĕ Хвастовически районĕнче халăха ирĕксĕрлесех перепись ви… кăларнă. Фашистсем ӳссе çитнĕ çынсен хушамачĕсемпе ячĕсене пĕтерсе лартасси патнех çитсе тăнă. Нимĕçсен влаçĕсем халĕ граждансене вĕсене панă номерсем тăрăх çеç регистрацилеççĕ. Ӳссе çитнĕ кашни çыннăн сулахай алли çинче ятарласа çыхнă шурă тутăр пулмалла.

Ун çине пысăк цифрăсемпе çав çынна панă номере çырса хунă, çын пурăнакан ял номерне, вăл номĕре хăш уйăхра панине çырса хунă. Çак ирсĕр паллăсем пулмасан, çын ниçта та тухса çӳреме пултараймасть. Çыннăн ятарласа çыхнă тутăр пулмасан, нимĕçсен охрани ун çине ним асăрхаттармасăрах перет. Нимĕçсем халăха пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳреме чарса лартнă. Кӳршĕри яла каяс пулсан та гитлерла комендантран ятарласа пропуск илес пулать.

Çак крепостникла режима пăсма хăякансене нимĕçсем тискеррĕн асаплантарса вĕлереççĕ. Хвастовически районри Красная ялĕнче гитлеровецсем çуртсене ухтарса çӳренĕ чухне сывăхри ялсенчен килнĕ 18 çынна тытса чарнă. Арестленисен пропусксем пулман. Арестленисем çар сооруженийĕсем тума ирĕксĕр ĕçе кайма килĕшмен, çакăн хыççăн вĕсене персе вĕлернĕ.

Халăх пурăнакан пунктран хăйсен ирĕкĕпе пропусксăрах тухса кайсан, нимĕçсем «айăпа кĕнĕ» çынăн çемьипе пĕтерсе тăкаççĕ, унăн çуртне çунтарса яраççĕ. Çакăн пек пĕтерсе тăкнă палачсем Борисов районĕнчи Кастрица ялĕнче пурăнакан Долгопалецăн çемьине. Милеево ялĕнче фашистсем ирĕксĕр ĕçрен тарса килнĕ 8 гражданина персе вĕлернĕ. Район центрĕнче—Хвастовичи ялĕнче—нимĕçсем крепостникла регистраци правилисене пăхăнманшăн 3 çынна çакса вĕлернĕ.

Б. АФАНАСЬЕВ,
Е. КАПЛАНСКИЙ.

Фашистла шпионсене тытнă

«Кĕлмĕçсем»

Фронт линийĕ мĕнпурĕ те 5 километрта кăна. Çуллахи шăрăх кун. Инçетре персе тăнă сасă илтĕнет. Çул тăрăх икĕ хĕрарăм пыраççĕ. Пĕрин аллинче 2 çулти ача. Вăрман патĕнче, çул хĕрринчи тĕмсем патĕнче, вĕсене симĕс петлицăллă боец чарăнма хушать.

— Ăçта?

— Çăкăр шыратпăр, ырă çынсем. Кĕлмĕçре çӳретпĕр эпир. Ылханлă нимĕç мĕн пуррине пĕтĕмпех бомба пăрахса пĕтерсе тăкрĕ, пĕтерчĕ пире, эсрел…

— Сирĕн документсем пур-и?

— Документсем çук.

— Мĕншĕн эсир малалла каятăр? Унта переççĕ вĕт.

— Пирĕншĕн хăрушă мар. Боецсенчен çăкăр тупăпăр тен…

Хĕрарăмсем çĕтĕк-çатăк тумланнă. Вĕсем мĕскĕнĕн курăнаççĕ. Калаçасса та мĕскĕнĕн калаçаççĕ, хăйсене шеллеттерме тăрăшаççĕ. Пĕри ятарласах куççульне шăлса илчĕ. Красноармеец Мурачев хĕрарăм çине тимлĕн пăхса тăрать. Çук, ун умĕнче чăннипе хурлăх куракан çынсем мар…

— Манпа пырăр-ха.

… Тăватă уйăх каярах фашистсен разведки çак икĕ хĕрарăма пирĕн тыла каçарса янă. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем куçса çӳрени çинчен, штабсем ăçта вырнаçса тăни çинчен, госпитальсемпе ытти учрежденисем çинчен тĕплĕн сведенисем пухнă.

Шпионкăсем каялла хăйсен енне каçса кайма шутланă пулнă.

Вăрманти шалаш

Старши сержант Алдокимов нарядра пулнă. Çул вăрман витĕр выртнă. Алдокимовпа унăн боецĕсем кунта чи малтанхи хут килнĕ. Чăтлăхра сержант юхăнса кайнă шалаша курнă. Шалашра никам та пулман. Сылтăм енче шертесем çинче продуктсем, консерва, темиçе сухари, чайник пулнă.

«Юрать, кĕтсе пăхар. Продуктсем пур пулсан, вĕсемпе кам та пулсан усă курать пулмалла»—тесе шутланă Алдокимов. Нарядра малалла ярса, вăл хăй засадăра ларса юлнă. Пĕр сехет, икĕ сехет иртнĕ. Татах виçĕ сехет иртнĕ. Юлашкинчен туратсем çатăртатни илтĕннĕ, вара шалаш патне граждăнла тумланнă çӳллĕ арçын сывхарса пынă. Алдокимов ăна йĕритавра пăхса илме, шалаша кĕме тата апат çиме тытăнмашкăн май панă.

Вăрманта пурăнакана тытса чарнă. Фашистсен разведкин татах тепĕр диверсанчĕ пĕтнĕ.

Хĕрарăм тумĕпе

Фронт сывăхĕнчи анлă çул. Вĕçĕ-хĕррисĕр грузовиксем ирте-ирте каяççĕ. Аякра, çул хĕррипе, пĕр хĕрарăм хуллен утса пырать. Анчах утти ун хĕрарăм утти мар. Тутăрне те çыхма пĕлмен. Çакна пограничник Фролов асăрханă.

— Гражданка, ăçта каятпăр?—тесе ыйтнă вăл васкамасăр.

Тепĕр секундăранах вăл хĕрарăм çинелле штык тĕлленĕ. Пограничник ыйтăвĕ çине ответлес тесе лешĕ çавăрăнсанах, Фролов хăйĕн умĕнче хĕрарăм тумне тăхăннă арçын тăнине курнă.

Ухтарнă чухне унăн çумĕнче çар çинчен калакан паха документсем тупнă.

Пропуск панă çĕрте

Пропуск паракан пункт витĕр кашни кунах çĕршер, пиншер çын тухать. Кунта тăшман кĕрсе ан кайтăр тесен, уйрăмах сыхăлăхлă пулас пулать. Тăшмана палласа илме çăмăлах мар. Тăшман агенчĕсен суя документсем яланах хатĕр. Çиелтен пăхсан вăл документсем чип-чиперех.

Пропуск паракан пункт патĕнчен вăтам çулсенчи арçын иртсе пынă. Ун çинче çĕтĕлкелесе пĕтнĕ, çулланса кайнă пиншак, вараланса пĕтнĕ шалавар, тусанланса типсе кайнă атă пулнă.

Документсемпе паллашнă хыççăн, пограничник çав хутсен хуçи çине тимлĕн пăхса илнĕ. Çынни тирпейсĕр, вараланса пĕтнĕ пулнă, документне вара халĕ çеç хатĕрленĕ, алпа та тытса пăхман. Документне 1942 çулти мартăн 12-мĕшĕнче панă тесе паллă тунă. Халĕ вара июлĕн 5-мĕш. Тăватă уйăх иртнĕ. Апла пулин те документа ĕнер кăна панă пек курăннă. Тăватă уйăх хушшинче çак çын ăна пĕрре те алăра тытса пăхман пулĕ-ши вара!

Тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн, пограничник фашистсен опытлă шпионне, фронт линийĕ урлă çак кунсенче кăна пирĕн енне каçса килнĕскере, тытса чарма паллă пулса тăнă.

Килхуçи хĕрарăмĕн сыхăлăхĕ

Фронт сывăхĕнчи пысăк мар хулара темĕнле Б. ятлă çын пурăннă. Вăл ниçта та ĕçлемен, çĕрле тĕлĕрсе выртпа чухне ютçĕршыв чĕлхипе ăнланма çук сăмахсем каланă. Çакă вара килхуçи хĕрарăмне иккĕлентернĕ. Пĕррехинче, çак çын киле чупса пырса чемоданра васкасах темĕн шыранă чухне, килхуçи хĕрарăмĕ кĕпе-йĕмсем хушшинче револьвер кĕпçине курнă. Килхуçи хĕрарăмĕ çакăн çинчен çийĕнчех НКВД-на пĕлтернĕ.

Ухтарнă чухне Б. чемоданĕнче, револьверсĕр пуçне, совет укçине нумай тупнă тата паха документсем тупнă. Арестленĕ çын нимĕç разведкин пысăк шпионĕ пулнă, вăл ятарласа шкулта вĕреннĕ пулнă.

И. ДЕНИСОВ.
ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ (ТАСС спецкорĕ).

Сапερсем

Пирĕн паттăр саперсем оборона линине çирĕплетес ĕçре çĕр çывăрмасăр, хăюллăн ĕçлеççĕ. Чи малта Дербенев, Гостеев, Целищев, Кислицин боецсем. Вĕсем пралук карма юпасем лартаççĕ.

Вĕсем хыççăн çамрăк саперсем-чăвашсем пурĕ 5 çын пыраççĕ: Николаев, Иванов юлташсем йĕплĕ пралук караççĕ, пралуксене юпасем çумне Смирновпа Щербина юлташсем çирĕплетсе пыраççĕ. Пурте хăйсен ĕçне кăтартуллăн туса пыраççĕ. Пĕр-пĕрин пе калаçас-тăвас пулсан, куçпа сулса çеç кăтартаççĕ, мĕншĕн тесен йĕплĕ пралукăн тепĕр енче, 60—100 метрта нимĕçсем тăраççĕ.

Боевой заданисене питĕ хăвăрт пурнăçланă хыççăн блиндажра эпир калаçу пуçларăмăр.

Калаçса ларнă вăхăтрах нимĕçсем енче симĕс ракета сывлăшалла çĕкленчĕ. Ун хыççăн минометран пени илтĕнчĕ.

— Пирĕн сулахай фланга хыпалать,— тет лейтенант Артеменкин.

Чăнах та, унчен те пулмарĕ, çĕр чĕтренсе кайрĕ: вăрман шăплăхне çурса, нимĕçсем пенĕ енелле пирĕн миномет батарейи пеме пуçларĕ. Акă сирĕ мина çурăлни илтĕнчĕ. Тӳпенелле хура тĕтĕмпе çулăм çутти хăпарса кайрĕç.

Çакăн пек вăхăтра пирĕн саперсем хăйсен ĕçне тăваççĕ. Тăшман пырса кĕмелли вырăна минăсем лартаççĕ, нимĕçсем лартнă минăсене кăларса илеççĕ, рогаткăсем хатĕрлеççĕ.

Çапла пирĕн тăван çĕршывăн патриочĕсем, хăйсен пуçĕсене шеллемесĕр, ирĕклĕхшĕн, тăван çĕршывшăн çапăçаççĕ.

Политрук заместителĕ
Мих. КАРПОВ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Фронт валли ытларах та ытларах продукци туса кăларар

Вагонсем юсакан заводри митинг

КАНАШ. Июлĕн 18-мĕшĕнче вагонсем юсакан заводри рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем митинга пухăнчĕç.

Завком председателĕ Кисленко юлташ митинга уçрĕ те партбюро секретарьне Сорокин юлташа сăмах пачĕ. Сорокин юлташ малтанах Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ 1942 çулта июнь уйăхĕнчи ĕçсен итогĕсене пăхса тухнă хыççăн Канашри вагонсем юсакан завод социализмлă ăмăртура ик...ĕш вырăна тухнине палăртни, ăна преми тата СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне пама йышăнни çинчен пĕлтерет. Унтан вăл завода Хĕрлĕ ялав памалла тунă май-па вагонсем юсакан заводсен трестĕ вĕсем патне янă саламлă телеграммăна вуласа кăтартать.

— Завод коллективĕ июнь уйăхĕнче начар мар ĕçлерĕ пулсан, — тесе калать Сорокин юлташ,—июль уйăхĕнче тата лайăхрах ĕçлемелле, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн кĕрешмелле.

СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă заводăн коллективне Чăваш АССР Правительствипе ВКП(б) Обкомĕн ячĕпе ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. Матвеев юлташ саламлать.

ВКП(б) Канаш хула комитечĕн ячĕпе митингра хула комитечĕн секретарĕ М. Репкин юлташ саламлă сăмах тухса калать. Вăл хăйĕн сăмахĕнче заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен, служащисен коллективне СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне малашне те заводра хăварассишĕн, Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн тăрăшса ĕçлеме, социализмлă ăмăртăва анлăн сарма чĕнет.

Заводăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ цехри стахановец Мошницкий юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла калать:

— Пирĕн цех июнь уйăхĕнчи плана 129 процент тултарчĕ, июль уйăхĕнче эпир тата нумайрах продукци туса кăларма тăрăшăпăр, завод коллективне Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме пулăшăпăр, ытти рабочисене те пирĕн пек ĕçлеме чĕнетĕп.

Электросваркăра ĕçлекен стахановец Григорьев юлташ:—пире васкавлă тата çĕршывшăн питех те кирлĕ ĕçе тума хушнă, çав задание июлĕн 27-мĕшĕчен пурнăçламалла пулсан, эпир ăна срокченех тата лайăх пахалăхпа туса çитерессишĕн тăрăшса ĕçлетпĕр,—тет.

Унтан завод начальникĕ Поздняков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл завод умĕнче тăракан задачăсем çинче чарăнса тăчĕ.

Митингри рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем малашне тата лайăхрах ĕçлесси, фронта валли ытларах та ытларах продукци туса кăларас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлесси çинчен решени йышăнчĕç.

Производствăри çĕнĕ çĕкленӳ

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ ятпа Бенский юлташ директор пулса ĕçлекен заводра социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ хумĕ сарăлса пырать. Заводри рабочисем, инженерсемпе техниксем татах та тимлĕрех ĕçлеме тытăнчĕç.

Сборщицăсем Санчина, Ефремова тата Тонечкина юлташсем нормăна 165—180 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Механически цехри токарь Пинт юлташ яланах кӳлленхи заданине ирттерсе тултарать, çав цехри револьверщик Герасимов юлташ задание 215 процент, фрезеровщица Башмачникова 225 процент тултарать.

Инструментальщик Мищенко юлташ яланах нормăна 300 процент ытла тултарса пырать.

Заданисене вăхăтра пурнăçлаççĕ

СĔНТЕРВĂРРИ. Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, районри промкомбинатăн çĕвĕ мастерскойĕнче ĕçлекенсем июнь уйăхĕнче производство планне 110 процент тултарма сăмах панă. Вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртнĕ— июнь уйăхĕнчи плана 126 процент тултарнă.

Мастерскойра ĕçлекен Шуйман юлташ нормăна 218 процент, Королева юлташ—200 процент тултарнă, Глубова, Куяшова, Васильева тата Андреева юлташсем кашниех икшер норма туса пынă.

Июль уйăхĕнче те çĕвĕ мастерскойĕнче ĕçсем ăнăçлăн пулса пыраççĕ, заданисене вăхăтра пурнăçлаççĕ.

С. ПЕТРОВ.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыратпăр

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче пирĕн цехра рабочисемпе инженерно-технически работниксем, çĕршыва фронта ытларах та ытларах продукци туса парса, тăван Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума пулăшас шухăшпа-кăмăлпа пурăнаççĕ. Хăйсене панă заданисене вĕсем мĕнле те пулсан лайăхрах тата хăвăртрах пурнăçлама тăрăшаççĕ.

Цех коллективĕ иккĕмĕш квартал программине 112 процент тултарчĕ. Июнь уйăхĕнче кăна вăл планран ирттерсе темиçе пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Рабочисемпе работницăсем ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе тĕрлĕрен рационализаторла сĕнӳсем параççĕ. Ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухни тата ĕç вырăнне тĕрĕс организацилени, машинăсемпе, агрегатсемпе туллин усă курни—çаксем пурте ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыма пулăшаççĕ. Çакă вăл уйрăмăнах стахановецсен ĕçĕсенчен лайăх курăнать.

Комсомолец Иван Киселев производствăна ĕçлеме кĕрсенех техникăна тĕплĕн вĕренме пуçланă, ирĕн-каçăн цехран тухма пĕлмен. Каярахпа вăл ĕçлеме лайăх вĕренсе çитнĕ. Анчах вăл çакăнпа чарăнса тăмасть, производствăра лайăхрах та лайăхрах тĕслĕхсем кăтартас тесе, çĕнĕ ĕç меслечĕсем тупать. Унăн ĕç вырăнĕ яланах таса, инструментсем юсавлă та çивĕч. Киселев юлташ кашни минутăпа туллин усă курма тăрăшать. Çапла ĕçленипе ĕнтĕ вăл хăйĕн кулленхи ĕç нормине 200—270 процент тултарса пырать.

Çамрăк стахановецсем В. Прокопьевпа Пантелеймонов юлташсем ялан нормăсене 2-шер хут тултарса ĕçленĕ. Нумаях пулмасть вĕсем рационализаторла сĕнӳсем пачĕç. Икĕ сĕнĕвĕ те усăллă, вĕсене йышăннă. Халĕ акă вĕсем çав сĕнӳсем тăрăх ĕçлесе ĕç тухăçлăхне 3—4 хут ӳстерчĕç.

Ытти рабочисемпе работницăсем те начар мар ĕçлеççĕ, пурте хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлаççĕ. Клейщица Кочнева юлташ нумаях пулмасть нормăна тултараймасчĕ, вара Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнсан, вăл пачах урăх результатсем кăтартма пуçларĕ. Халĕ акă вăл кулленхи нормăна 200 процент е ытларах та пурнăçласа пырать.

Кочнева юлташăн ĕç вырăнĕ типтерлĕ, унта детальсем купаланса е сапаланса тăнине нихăçан та кураймăн. Кунсĕр пуçне тата вăл ĕç кунĕпе туллин усă курать, пĕр минутăна та сая ямасть.

Пирĕн цех коллективĕ ăмăртăва сарсах пырать. Производство программине срокчен тата лайăх пахалăхпа пурнăçлас, ĕç тухăçлăхне хăпартас, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес тĕлĕшпе июль уйăхĕнче эпир пысăк çитĕнӳ тума палăртнă. Илнĕ обязательствăна пурнăçлас тесе кашни рабочи кĕрешĕве тухнă. Паллах, ку уйăхра та эпир хамăра панă заданине ытлашшипех тултаратпăр.

П. АНИСИМОВ,
Çĕмĕрле комбинатĕнчи старши мастер.

Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕн ĕçне вăйлатмалла

СĔНТЕР. Юнга ялсоветĕнчи «Родник» колхозра осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕнче 26 член тăрать. Анчах çак организаци юлашки вăхăтра нимĕн те ĕçлемест, мĕншĕн тесен организацин совечĕ саланса кайнă, ăна çĕнĕрен суйлама тăрăшакан çук.

Осоавиахимăн Сĕнтĕр районĕнчи совечĕ «Родник» колхозри пуçламĕш организацие пулăшма тивĕçлĕ.

Ф. ЯНДУШКИН.

Пушара хирĕç кĕрешес ĕçе лайăх йĕркеленĕ

КАЛИНИНО. Тури Карачуравари «Ленин çулĕпе» колхозра пушара хирĕç кĕрешес ĕçе аван йĕркеленĕ. Колхоз председателĕ А. Титов тата пушар дружинин начальникĕ С. Николаев юлташсем тăрăшнипе общественлă çуртсемпе колхоз сыпăкĕнчи тата колхозăн хуçалăхĕнчи çуп-çапсемпе ăпăр-тапăр сене тасатнă. Суртсен çывăхне, çавăн пекех тата колхозниксен килĕсенче те шывсем лартнă, хăйăрсем хатĕрлесе хунă. Ялта кашни 15 килтен пĕр çын хурал тăраççĕ.

Çавăн пекех Асакассинчи «Ким» колхозра та ку ĕçе япăх мар организациленĕ. Пушар хатĕрĕсем, багорсем, витресем, пусмасем хатĕр тăраççĕ. Колхозра каçхине яланах хурал тăрать.

Б. ШОРНИКОВ.

РЕСПУБЛИКĂН УЙХИРĔСЕНЧЕ

Пĕтĕм вăя уборкăна лайăх ирттерме мобилизацилер

ВĂРНАР. Районри чылай колхозсем тухăçлă тырпул туса илсе тăван çĕршыва тата Хĕрлĕ Çарăн воинĕсене ытларах пулăшу парассишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ.

Чăрăшкас Мăратри «11 лет Чувашии» колхоз уборкăна пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Кунта иртнĕ çулта тырпула пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех авăнра вырса вăраха янă, çавна пула тырă чылай тăкаланнă. Колхоз кăçал çакна тĕплĕн шута илнĕ. Мĕншур тырра кăçал вĕсем жнейкăсемпе вырса тата кĕреплеллĕ çавасемпе çулса пухма шутлаççĕ. Çулнă тырпула вăхăтра турттарса тăма тата чиналтанхи тырра государствăна пама кирлĕ условисене халех хатĕрлесе хума тăрăшаççĕ.

Анчах хăшпĕр колхозсенче çитменлĕхсем нумай-ха.

Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина» колхозăн кашни бригадине 4-шар урапа çеç тивет, вĕсенчен те чылайĕшĕ çирĕп мар. Çапла пулсан та колхоз çĕмĕрĕлнĕ урапасене юсас ĕçе организацилемен. Кӳлтесем чылаях аякка турттармалла пулать. Колхоз правленийĕ кăна та шута илмен. Тырă пуссисем çывăхрах вырăнта йĕтемсем тума палăртман.

Районри колхозсем хĕрсех утă çулаççĕ. Ырăш вырма тухас кунсем çывхарса çитеççĕ. МТС-ра колхозсен уйхирĕсене тухмалли комбайнсене тата молотилкăсене халĕ те юсаса çитермен. Районра 17 комбайнран çурри кăна вырма тухма хатĕр. Çакăн пекех молотилкăсене ĕçе хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçсем япăх тăраççĕ.

Кăçал колхозсенче 23 молотилка ĕçлемелле. Анчах вĕсенчен пĕри çеç ĕçе юрăхлă, ыттисем çинчен МТС-ра пĕлмеççĕ.

Уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе уйрăмăнах Хапăс, Упнер, Зеленовка, Санарпуç колхозĕсенче ĕç начар пырать. Асăннă колхозсенче пĕринче те жнейкăсене тата ытти машинăсене юсаман.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Тырпула вăхăтра пухса кĕртме хатĕрленеççĕ

Пăрачкав районĕнчи «Серп и молот» колхоз уборкăна тимлĕн хатĕрленет. Колхоз лаша таврашĕсене, утă çулмалли машинăсене тата çавасемпе çурласене ĕçе хатĕрлесе çитернĕ.

Тырă вырмалли машинăсемпе ĕçлеме колхоз çĕнĕ кадрсем хатĕрлет. Тырăсене жнейкăпа вырма уйăрнă çынсем халĕ жнейкăн чаçĕсене вĕренеççĕ.

МОИСЕЕВА.

Утă çулмалли плана 67 процент пурнăçланă

ЧКАЛОВСКОЕ, июлĕн 17-мĕш (**Хамăр корр.**). Районри «Çăлтăр» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем çаран утине тата нумай çул кушши ӳсекен курăксене çулса пухас ĕçе ăнăçлăн вĕçлерĕç. Район, пĕтĕмĕшпе илсен, утă çулмалли плана 67 процент тултарчĕ.

Колхозсен фермисенче йышлăн ĕрчесе пыракан выльăх-чĕрлĕх валли тата Хĕрлĕ Çарăн лашисем валли ытлăн-çитлĕн ырă та сĕтеклĕ апат хатĕрлессишĕн колхозниксем кĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз 110 гектар çинчи курăксене лайăх пахалăхпа пухса кĕчĕ. Ку ĕç Ленин, Ворошилов ячĕсемпе тăракан колхозсенче те лайăх пулса пырать.

«Красный Октябрь» колхозра утă çулма вăйпитти колхозниксемпе пĕрле шкулсенче вĕренекен ачасем те тухаççĕ. Вĕсенчен хĕр-пĕрисем ĕçре колхозниксенчен пĕре те юлмаççĕ. Ш. Алеев, В. Вахитов, З. Айнетдинов юлташсем, тĕслĕхрен, кунне 0,20 гектар çулас вырăнне 0,25 гектар утă çулаççĕ.

Ирхи çĕртмене кашни колхозăн халех туса пĕтермелле

ЧКАЛОВСКОЕ, июлĕн 17-мĕш. (**«Чăваш Коммуни» корр., телефонпа**). Июлĕн 15-мĕш тĕлне район ирхи çĕртме тумалли плана 102 процент тултарнă. Районри 30 колхозран 22-шĕ çĕртме тумалли плана ирттерсе тултарнă. Вĕсем кăçал кĕрхи тырăсем акмалли çĕр лаптăкне татах та анлатассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

«Кзыл Йолдыз» колхоз ирхи çĕртмене план тăрăх 306 гектар тумалла, вăл июлĕн 15-мĕш тĕлне 335 гектар тунă, «Осоавиахим» колхоз 256 гектар вырăнне 320 гектар туса хăварнă. «Майăн 1-мĕш» колхоз ирхи çĕртме планне 135 процент тултарчĕ. Çавăн пекех «Пламя Октября», «Çăлтăр» колхозсем те çĕртме тумалли плана чылаях ирттерсе тултарнă.

Анчах та районра çĕртме тăвас ĕçĕн планне тултарман колхозсем те пур-ха. «Путь Ленина» колхоз (председателĕ Тарасов) ирхи çĕртмене пурĕ 364 гектар тумалла, паянхи куна 250 гектар çеç тунă. Çавăн пекех «Правда» колхоз та çĕртме тумалли плана 62 процент çеç, «Ударник» колхоз 83 процент çеç тултарнă.

Уборкăна тухиччен вăхăтпа туллин усă курса, районри пур колхозсен те ирхи çĕртме сухине пĕтĕмпех туса пĕтермелле.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Колхозри пуçламĕш парторганизаци

Суринскинчи (Елчĕк р.) «Марс» колхозри пуçламĕш парторганизацире ВКП(б) членĕсем 4, парти членĕн кандидачĕсем 2. Парторганизацин секретарĕ пулса А. Гаязов юлташ ĕçлет.

Пуçламĕш парторганизаци яланах план тăрăх ĕçлесе пырать. Кăçал коммунистсен пухăвĕсем 9 хутчен пулса иртнĕ. Парти членне çĕнĕрен 1 çын, ВКП(б) членĕн кандидатне 2 çын илнĕ. Пухусенче партипе правительство решенийĕсене, Сталин юлташăн февралĕн 23-мĕшпе майăн 1-мĕшĕнчи приказĕсене пурнăçа кĕртес ыйтусене, социализмлă ăмăртăва анлăн сарасси çинчен сӳтсе-явса решенисем йышăннă.

Парторганизаци колхозри мĕнпур вăя фронта пулăшас, вăйлă тырпул туса, ăна пухса кĕртес задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилесе пырать. Иртнĕ хĕлле колхоз тата колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 8 кĕрĕк пиншак, 24 мăшăр çăматă, 28 çĕлĕк, 39 мăшăр çăм алшшип, 20 мăшăр çăм чăлха, 42 мăшăр ăшă алса, оборона фондне пĕтĕмпе 16 сурăх, 8 чăх, 8 хур, 1.025 тенкĕ укçа, 1.800 тенкĕлĕх облигацисем панă. Çак кунсенче Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем çĕлетме 100 тир панă пулнă. Укçапа япала лотерейин билечĕсене 4.800 тенкĕлĕх сарнă. «Комсомол Чувашии» бронепоезд валли 2.100 тенкĕ, самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума 2.250 тенкĕ пухса панă.

Колхоз иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне 4.600 грамм тырă валеççе панă. Колхозниксем хăйсен тыррине 1.140 пăт государствăна сутнă. 1942 çулти обязательство шучĕпе колхоз государствăна 25 центнер тырă панă.

Социализмлă ăмăртăва анлăн сарнипе колхоз кăçалхи çуракинче 690 гектар акас вырăнне 720 гектар акса хăварнă, планран ирттерсе 30 гектар акнă. Акана кĕске срокрах вĕçленĕ. Июлĕн 1-мĕш тĕлне çум çумласа, çĕртме туса пĕтернĕ.

Ялти коммунистсем, комсомолецсем тата партире тăман активистсем агитациллĕ ĕçе тăтăшах туса пыраççĕ. Кашни бригадăрах, кашни звенорах агитатор пур. Агитаторсем хăйсен ĕçне колхозниксем хушшинче уйхирте, фермăсенче, клубра туса пыраççĕ. Вĕсем партипе правительство ялхуçалăхĕнчи ĕçсем пирки йышăннă постановленисене пурнăça кĕртесси, социализмла ăмăртса ĕçлесси çинчен ăнлантарса параççĕ, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, вăрçăри эпизодсене вуласа параççĕ, каласа кăтартаççĕ. Агитаци ĕçне туса пыракансем нумайĕшĕ производствăра тăрăшса ĕçлеççĕ, ĕç нормисене ирттерсе тултараççĕ. Çавăн пек ĕçленипе вĕсем ытти колхозниксене ĕçре хавхалантарса пыраççĕ, стахановла ĕçлекенсен опычĕсене каласа кăтартаççĕ, вĕсем пек ĕçлеме чĕнеççĕ.

Колхозниксен пухăвĕсенче политикăллă темăпа час-часах пуçламĕш организацин секретарĕ Гаязов юлташ доклад туса парать.

Кашни кунах ĕçрен таврăннă хыççăн колхоз правленийĕ канашлу пухать. Канашлура çав кун мĕнле ĕçленине пăхса тухаççĕ.

Политикăллă ĕçе хуçалăхри ĕçсемпе тачă çыхăнтарса пырса, парторганизаци ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума пултарнă. Вăл ялти актива хăй тавра пĕрлештернĕ. Колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса колхоз кăçал тырпулсене уйхиртен 16 кун хушшинче пухса кĕртме обязательство илнĕ.

Уборкăна хатĕрленес тата ирттерес ыйтăва парти пухăвĕнче, колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явса, ку тĕлĕшпе мĕн тумаллине кăтартса решени йышăннă. Колхозăн 8 жнейка, вĕсене пурне те юсаса лартнă, кивĕ урапасене юсанă тата çĕнĕ урапасем тунă. Ыраш акма вăрлăх, машинăсем хатĕрленĕ.

Пуçламĕш парторганизаци халĕ СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление пурнăça кĕртес тĕлĕшпе ĕçлет.

П. Д.

Ют çĕршывсенче

Англи бомбардировщикĕсем кăнтăрла Рур çине пырса тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: июлĕн 18-мĕшĕнче кăнтăрла «Ланкастер» йышши бомбардировщиксем Рур облаçĕнчи темиçе объект çине вĕçсе пырса тапăннă. Противникăн истребителĕсем Англи самолечĕсене кăштах хирĕç тăнă, анчах Англи самолечĕсем хăйсен базисем çине ăнăçлăн вĕçсе таврăннă.

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔСЕМ АНГЛИ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 17-мĕшĕнче кăнтăрла противникăн истребителĕсем Англин хĕвелтухăç çыранĕнчи пĕр пункт çине бомбăсем пăрахнă. Каярахпа Германи авиацийĕ пысăк Лондонăн пĕр районĕ çине бомбăсем пăрахнă. Вилнисем çук, бомбăсем кӳнĕ сиен пысăк мар. Лондонри ĕнерхи тревога юлашки тăватă уйăх хушшинче кăнтăрла пĕрремĕш хут тунă тревога пулнă. Паян ирхине противникăн авиацийĕ каллех Англин кăнтăр çыранĕнчи хулисенчен пĕрин çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметран пенĕ. Граждăнла халăхран 12 çын сиен курнă.

Египетри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 19-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер импери войскисем фронтăн çурçĕр секторĕнче хăйсен позицийĕсене хăйсен аллинчех тытса тăнă. Вăтаçĕрти секторта Англи войскисем Рувей-Сат ятлă тупллă вырăн çумĕпе кăштах малалла куçнă. Çав кунах каçхине противникăн танкĕсемпе пехоти контратака тунă, вăл контратакăна сирсе пăрахнă. Кăнтăрти секторта импери войскисем активлăн кĕрешсе ăнăçусем тунă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: июлĕн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Мерса-Матрух çине вĕçсе пырса тапăннă; Мерса-Матрух вăл Роммель генералăн вăйĕсем валли хатĕрсем тăратмалли паха база пулса тăнă. Складсемпе нефтехранилищесем çине фугаслă тата çунтаракан пысăк бомбăсем темиçе тонна пăрахнă. Темиçе пин галлон нефте вут тивертнĕ.

АМЕРИКĂН ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАЧĔСЕНЧЕ ÇАРА ÇЫНСЕМ ÇĔНĔРЕН ИЛЕÇÇĔ

ВАШИНГТОН, июлĕн 18-мĕш. (ТАСС). Çар министрĕ Стимсон пичет представителĕсене çапла каланă: çитес вăхăтра Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче çара 18 çултипе 19 çулти çынсене илеççĕ. тенĕ.

ТУРЦИН ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИ ПУТНИ

АНКАРА, июлĕн 19-мĕш. (ТАСС). Анатоли агентстви çапла пĕлтерет: «Атылай» ятлă подводнăй лодка июлĕн 14-мĕшĕнче Дарданелл районĕнче вĕренӳ шучĕпе ишсе çӳренĕ, шыв айне аннă чухне вăл каль паллă мар сăлтавсемпе шыва путнă. Лодка шыв тĕпне 180 метр тарăнăшне анса ларнă. Ăна çăлас тесе тăрăшнă пулин те, çăлма май пулман, подводнăй лодка тата унăн ăшĕнчи 38 офицерпа матрос пĕтнĕ.

РУМЫНИПЕ ВЕНГРИ ЧИККИНЧИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ТЫТĂÇУСЕМ

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтернĕ: Румынипе Венгри чиккинче юлашки виçĕ уйăх хушшинче хĕçпăшаллă уйрăм тытăçусем яланах пулса пынă. Пуринчен ытла чикĕре куракан отрядсем тытăçнă. Тапăнакансем чикĕ урлă каçсан, вĕсем вара тырра тата ялсене çунтара-çунтара янă. Çав тытăçусене пула нумай çын вилнĕ.

ИНДИРИ НАЦИЛЛĔ КОНГРЕСĂН ИСПОЛКОМĔН БЮРОВĔ ЙЫШĂННĂ РЕЗОЛЮЦИ

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Индири нациллĕ конгресăн исполкомĕн бюровĕ «Индире Англия пуçпулса тăрассине пĕтерме» ыйтакан резолюци йышăннă. Анчах вăл резолюцире тата çапла каланă: «Конгресс пĕрлешнĕ нацисене вăрçăра кансĕрлеме пултаракан мĕнле те пулсан ĕçсем тăвасран сыхланать», тенĕ.

Резолюцире малалла çапла каланă: Англи правительстви Конгресс ыйтнине пурнăçламасассăн, Конгрес вара, Ганди ертсе пынипе тата вăйпа усă курмасăр, Индин политикăллă прависемпе ирĕклĕхне хӳтĕлеме мĕн вăй çитнĕ таран тăрăшĕ, тенĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви, Индири нациллĕ конгресăн исполкомĕн бюровĕ йышăннă резолюци çинчен каласа çакна палăртать: Индире урăх партисем те пур, вĕсем мусульмансен чылай йышлă çыннисем тата тĕрлĕ сословире тăракан 60 миллион çынăн партийĕсем пулса тăраççĕ; вăл партисен Инди правительствине хăйсен представителĕсене яма право пурах, тет.

Конгресс Индире Англия пуçпулса тăнине пĕтерме ыйтни çинчен каланă май информаци министерстви çакна кăтартса парать: Англин çар кабинечĕ хăйĕн сĕнĕвĕсенче çапла каланччĕ: вăрçă ĕçĕсем пĕтсенех Индин мĕнпур ушкăнсен интересĕсене шута илекен учредительнăй собранийĕ пухăнĕ, Англи правительстви вара çав собрани çырса хатĕрленĕ кирек мĕнле çĕнĕ конституципе те килĕшĕ, тенĕччĕ. Çавăн хыççăн вице-король çумĕнчи исполнительнăй совета индиецсене кĕртсе ăна чылай сарнăччĕ, индиецсем унта халь пысăкрах пай пулса тăраççĕ. Англи правительствин хальхи вăхăтри тĕп задачи вăл—пĕрлешнĕ çĕршывсен çар хăватне ӳстересси пулса тăрать. Англичансем Индирен тухса кайни çав пĕрлешнĕ çĕршывсем Индие хӳтĕлессине сыхлантарса лартнă пулĕччĕ. Конгресăн нумай членĕсем çакна ăнланса илнĕ, Раджагопалачария пек çынсем конгресран тухни çавăн çинчен калать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

АЛАТЫРСКИЙ ТЕХНИКУМ ЖЕЛ.-ДОР. ТРАНСПОРТА

и временно находящиеся при нем Днепропетровский, Славянский (Украина) и Великолукский (Калининская область) техникумы ж.-д. транспорта об'являют осенний прием в 1942 году учащихся по специальностям:

1) «Электрическая и газовая сварка» и
2) «Паровозное хозяйство» — Алатырский техникум.
3) «Движение и грузовая работа» — Славянский и Днепропетровский техникумы.
4) «Паровозное хозяйство» и «Вагонное хозяйство» — Великолукский техникум.

В техникум принимаются лица обоего пола от 15 до 30 лет.

Окончившие в 1941—42 году среднюю школу или неполную среднюю школу принимаются без испытаний. Остальные подвергаются испытаниям согласно правилам приема в техникумы.

Срок обучения для окончивших 7 классов — 3 года, 8 и 9 классов—два половиной года, 10 классов—2 года.

Заявления принимаются с 25 мая по 25 августа. Начало занятий с 1 сентября.

Отличники учебы обеспечиваются стипендией.

Плата за обучение 150 руб. в год.

От платы за обучение освобождаются дети пенсионеров и призванных в ряды РККА.

Иногородним предоставляется общежитие.

Заявления подавать по адресу: г. Алатырь, ЧАССР, Первомайская ул., дом 50. Подробности почтой.

АДМИНИСТРАЦИЯ.

2—2.

ЧЕБТОРГУ СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ

на постоянную работу столяры, сапожники, ученики столярного и сапожного дела и агенты по скупке домашних вещей.

Зарплата по соглашению.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Ленина, д. № 11, отдел кадров. Тел. 2—26

3—2.

ЧЕБОКСАРСКОЙ ХЛОПЧАТО-БУМАЖНОЙ ФАБРИКЕ

срочно требуются на работу мужчины и женщины, как имеющие квалификацию, так и желающие получить ее.

Оплата труда сдельная.

Рабочие обеспечиваются питанием в столовой и продовольствием через ларек фабрики.

Дети поступивших рабочих обеспечиваются местом в детском саду и в яслях.

Обращаться в отдел кадров фабрики по адресу: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, дом № 20.

3—2.

ЧУВАШСЕЛЬЭЛЕКТРО СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ:

электромонтеры всех разрядов и ученики для работы в колхозах и сельских местностях Чувашской АССР.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. № 7, Сельэлектро.

Дирекция.

3—2.

СБЕЖАЛА ЛОШАДЬ

колхоза «Путь к коммунизму» Октябрьского района. Приметы: мышатой масти, холка по обеим сторонам опухла, задняя правая нога выше колена имеет небольшую рану.

12 июля с. г. сбежал мерин гнедой масти, с конного двора.

Знающих о местопребывании его, просим сообщить по адресу: ул. К. Маркса, 80, Транспортный цех.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ—пегая кобыла с белой полосой через спину на живот, на носу, проточина с переходом на левую ноздрю.

О месте нахождения просьба сообщить по адресу: гор. Чебоксары, Ленинградская, 45.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

ІТ 190 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.